Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

17 (8083) № ✻ Юн кун, 2013 çулхи пуш (март) уйăхĕн 13-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Çулталăк пĕтĕмлетĕвĕ

## Профессире чи лайăххисем




*Çĕннине шыракансем телейлĕ, вĕсен ăнăçăвĕсем курăмлă. Ыранхи куна пăхса ĕçлемеллине пирĕнтен паян пурнăç ыйтнине кулленхи пурнăçра кашниех ăнланатпăр, хамăр çинче туятпăр. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев нарăс уйăхĕн 26-мĕшĕнче «Районта 2012 çулта выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче ĕçлекенсем хушшинче иртттернĕ экономика ăмăртăвĕн кăтартăвĕсем çинчен» йышăну çине алă пусрĕ. Унпа килĕшӳллĕн чи лайăххисем те паллă. Вĕсем (сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла): Суворов яч. хис. хуçалăхри сысна пăхакан А. Александров, «Оринино» хуçалăх ветеринарĕ Е. Ешмолова, Суворов яч. хис. хуçалăхри ĕне сăвакан В. Печкова, «Путь Ильича» агрофирмăн техник-осеменаторĕ К. Димитриева, «Свобода» хуçалăхăн тĕп зоотехникĕ Э. Замятина, «Оринино» хуçалăхăн Патаккассинчи ферма заведующийĕ Р. Блинова, «Герой» хуçалăхри пăру пăхакан Н. Рыжкова, «Свобода» хуçалăхри сысна пăхакан О. Петрова.*

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Ял çыннисемпе тĕл пулаççĕ

Район администрацийĕн кунĕсем

***Ял тăрăхĕсене тухса район администрацийĕн кунĕсене йĕркелесси йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Кăçал та кун пек мероприятисене йĕркелеме пăхнă. Вĕсем пирки кĕскен район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – район администрацийĕн йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ Лилия ТАРАСОВА каласа пама кăмăл турĕ:***

– Ял тăрăхĕсен территорийĕсенче кун пек тĕл пулусене – район администрацийĕн вырăнти ял тăрăхĕсенчи кунĕсене – кăçал та иртерес терĕмĕр. Çакă вырăнсенчи ыйтусене лайăхрах курса-пĕлсе тăма, вĕсене татса пама çийĕнчех конкретлă мерăсем йышăнма май парать. Çынсемпе куçа-куçăн тĕл пулса калаçнинчен вара ялан тенĕ пекех лайăххи кăна.

Кăçал район администрацийĕн кунĕсем пур ял тăрăхĕсенче те мартăн 12-мĕшĕнчен тытăнса мартăн 22-мĕшĕччен иртеççĕ. Унта ытларах район администрацийĕн ответлă ĕçченĕ хутшăнать. Кунпа пĕрлех вырăнсенчи ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем пулаççĕ. Кун йĕркинчи программăра ял тăрăхĕн администрацийĕн ĕçченĕсемпе тĕл пуласси, администраци ĕçченĕсене методика пулăшăвĕ парасси, граждансене хăйсене интереслентерекен ыйтусемпе ял тăрăхĕн администрацийĕнче йышăнассине йĕркелесси, район администрацийĕн пуçлăхĕ ял тăрăхĕн активĕпе – депутатсемпе, обществăлла организацисен представителĕсемпе (ветерансен канашĕ, хĕрарăмсен канашĕ, çамрăксен канашĕ т. ыт. те), ял тăрăхĕн территорийĕнче вырнаçнă предприятисен, организацисен, учреждениесен ертӳçисемпе, граждансемпе тĕл пуласси т. ыт. те. Кунпа пĕрлех Федераллă, республика влаç органĕсен представителĕсемпе район администрацийĕн ответлă ĕçченĕсем тухса калаçĕç. Депутатсен районти Пухăвĕн вырăнтан суйланнă депутачĕпе ял тăрăхĕн пуçлăхĕ 2012 çулхи ĕççем тата 2013 çулхи задачăсем пирки каласа парĕç, вырăнти предприятисемпе организацисен ертӳçисем хăйсен ĕçĕсемпе паллаштарĕç.

Сăмах май кун пек тĕл пулусем ĕнер Шетмĕпуç тата Уйкас Янасал ял тăрăхĕсенче иртрĕç ĕнтĕ.

**Паян тĕл пулусем Чуманкассипе Москакасси, мартăн 14-мĕшĕнче Оринипа Çатракасси, мартăн 15-мĕшĕнче Ильинкăпа Хорнуй, мартăн 18-мĕшĕнче Ярапайкассипе Юнкă, мартăн 19-мĕшĕнче Катькаспа Йӳçкасси, мартăн 21-мĕшĕнче Ярославкăпа Муркаш, мартăн 22-мĕшĕнче Турайпа Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕсенче иртеççĕ.**

**В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.**

Вырăнти суйлав

## Кандидатсем паллă

Апрелĕн 14-мĕшĕнче Çатракасси тата Ярапайкасси ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене суйлассипе вăхăт çитмесĕрех суйлав иртесси пирки хаçатра пĕлтернĕччĕ. Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене суйлама кандидатсем тăратас ĕç вĕçленнĕ.

Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене суйлама çаксене кандидата тăратнине регистрациленĕ:

**Çатракасси ял тăрăхĕн пуçлăхне суйлама:**

– Геннадий Вениаминович Трофимов, Пĕтĕм Раççейри «Единая Россия» политика партийĕн Муркаш районĕнчи вырăнти уйрăмĕ тăратнă;

– Александр Сергеевич Федоров, хăйне хăй тăратнă.

**Ярапайкасси ял тăрăхĕн пуçлăхне суйлама:**

– Эльвира Михайловна Алексеева, хăйне хăй тăратнă;

– Марина Дмитриевна Николаева, хăйне хăй тăратнă;

– Николай Витальевич Павлов, Пĕтĕм Раççейри «Единая Россия» политика партийĕн Муркаш районĕнчи вырăнти уйрăмĕ тăратнă;

– Денис Павлович Фролов, хăйне хăй тăратнă.

Кĕскен

## Ертӳçĕ улшăннă

2013 çулхи мартăн 4-мĕшĕнче РФ Перекет банкĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн управляющийĕн тивĕçĕсене Константин Киргизов пурнăçлама тытăннă. Унччен вăл «Корпоративный бизнес» блок кураторĕн-управляющийĕн çумĕн должноçне йышăннă.

17 çул хушши Перекет банкĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн управляющийĕнче вăй хунă Вячеслав Александров Чăваш Республикин медицина страхованийĕн территори фончĕн директорĕнче ĕçлеме куçнă.

Республикăра

## Çĕнтерӳçĕсене палăртнă

Мартăн 11-мĕшĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе, федераллă органсен ведомствисемпе территори органĕсен тата муниципалитетсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.

Чăваш Енри продукци тирпейлекен организацисен 2012 çулхи экономика ăмăртăвĕн итогĕсем çинчен экономика аталанăвĕн, продукци тирпейлекен тата сутуилӳ министрĕ Алексей Табаков каласа панă.

Асăннă ăмăртăва 52 предприяти хутшăннă. Призлă вырăнсене çаксем йышăнса илнĕ:

– 3-мĕш ушкăнпа (300 çынран тытăнса 600 çын таран ĕçлекен предприятисем): 1-мĕш вырăн – акционерсен «Шупашкарти «Сеспель» хупă обществи;

– 4-мĕш ушкăнпа (100 çынран тытăнса 300 çын таран ĕçлекен предприятисем): 3-мĕш вырăн – акционерсен «Моргаушский кирпичный завод» хупă обществи.

РАЙОНТА: ĕнер, паян, ыран

## Отчетпа суйлав пухăвĕсем пуçланчĕç

Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче отчетпа суйлав пухăвĕсен тапхăрĕ пуçланчĕ.

Пĕрремĕш пуху мартăн 7-мĕшĕнче «Герой» хуçалăхра иртнĕ. Пухăва хутшăнса район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев районăн социаллă тата экономика аталанăвĕ пирки каласа панă, пурнăçлама палăртнă ĕççем çинче кĕскен чарăнса тăнă.

Иртнĕ çулхи ĕç кăтартăвĕсемпе хуçалăх ертӳçи Г. Иванова паллаштарнă. Вăл иртсе кайнă çул хуçалăхшăн çăмăл килменнине палăртнă. Хуçалăхри ытти специалистсем те тухса калаçнă. Пуху хуçалăха малашне те Г. Ивановăна ертсе пыма шаннă.

## «Муркаш пики – 2013»

Çак ятпа иртекен конкурс районта ырă йăлана кĕчĕ ĕнтĕ. Кăçал ăна мартăн 15-мĕшĕнче ирттерме палăртнă. Унта 17–25 çулхи хĕрсем хутшăнма пултараççĕ. Вĕсем чăвашла илемлĕ те йĕркеллĕ калаçнине, тăван ен культурипе историне пĕлнине тата ытти енлĕ пултарулăхне сумлă жюри хаклĕ.

Çĕнтерӳçĕ пике «Муркаш пики – 2013» ята, 2-мĕш вырăна тухни – «Вице-Муркаш пики – 2013» пулма тивĕçеççĕ. Кунсăр пуçне конкурса хутшăнакансен тата тăвата номинацирен пĕринче çĕнтерӳçĕ пулма та май пур.

## Конкурс финалĕ иртрĕ

Шкулсенчи аслă вожатăйсен тата директорăн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕсен районти «Воспитать человека – 2013» конкурс финалĕ иртнĕ. Финалта çичĕ çын хăйĕн пултарулăхĕпе, ĕçри опычĕпе тата педагог ăсталăхĕпе паллаштарнă.

Район конкурсĕн çĕнтерӳçи пулма Калайкассинчи вăтам шкулта директорăн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ Александр Степанов тивĕçнĕ. Ытти ултă педагога тĕрлĕ номинацисенче палăртса чысланă.

## Район администрацийĕн пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илме

Шăмат кун, мартăн 16-мĕшĕнче, йăлана кĕнĕ тăрăх район администрацийĕн пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илессишĕн спорт ăмăртăвĕ иртет. Унта районти хуçалăхсемпе предприятисен, организацисемпе учреждениесен, район администрацийĕн пайĕсен, учительсен тата ял тăрăхĕсен командисем йĕлтĕр йĕрĕ çинче эстафетăра вăй виçĕç.

Ăмăртăва ирттерессипе район администрацийĕ ятарлă йышăну тунă. Ĕнер йĕркелӳ комитечĕ канашларĕ, ответлă ĕçченсем ăмăртăва ирттерме хатĕррине пĕлтерчĕç.

Эстафета положенийĕпе 3-мĕш страницăра паллашма пултаратăр.

**Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

Çырăнтару – 2013

## Хакĕ ӳсиччен çырăнăр

**Хаклă вулаканăм! Мартăн 31-мĕшĕччен «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата кăçалхи 2-мĕш çур çулта илсе тăма унччченхи хакпа – ултă уйăха 204 тенкĕ – çырăнтараççĕ.**

**Апрелĕн 1-мĕшĕнчен пирĕн хаçата çырăнмалли хак ӳсет: 216 тенкĕ те 30 пус пулать.**

**Çавăнпа малтанхи хакпа çырăнса юлма тăрăшăр. Ыранхи куна ан хăварăр.**

**Редакци.**

# Çын кĕсйинчине шутлама хушман та...

**Ĕç укçи**

***Ĕçлекен çыннăн ĕç укçи пирки сăмах пуçарас пулсан ку вăл яланах кăткăс та çăмăл мар ыйту пулнине палăртмалла. Паянхи пурнăçра вăл никамах та çитсе пымасть пулмалла. Çапах та ку тĕлĕшри пĕтĕмĕшле ӳкерчĕке уçăмлатас тĕллевпе район администрацийĕн экономика тата агропромышленноç комплексне аталантарассин пайĕн пуçлăхĕпе Нина КОСТИНĂПА тĕл пулнă май район экономикинче вăй хуракансем, вĕсен ĕç укçийĕ пирки сăмах пуçартăм.***

**– Нина Марксовна, малтанах çавна пĕлес килет: районти пур сферăра ĕçлекенсен шучĕ çак вăхăта мĕн чухлĕши?**

– Районта пурăнакан çынсен хисепĕ паянхи куна илсен вăтамран 34,6 пин çынпа танлашать пулсан, пур сферăра ĕçлекенсен шучĕ, пĕчĕк тата вăтам предпринимательство предприятийĕсене шутламасан, иртнĕ çул списока кĕртнипе пăхсан 5294 çын пулнă. Ку вăл унччченхи çулхинчен 32 çын сахалрах. Ĕçлекен çынсен шучĕ ытларах чакнисем шутĕнче ял хуçалăхĕ, сунар тата вăрман хуçалăхĕсем (124 çын), сывлăх сыхлавĕ тата социаллă услугăсем парасси (45 çын). Çав вăхăтрах промышленноç отраслĕнче продукци тирпейлекен производствăра вăй хуракансен шучĕ 2011 çулхинчен 46 çын, строительствăра 82 çын ӳсрĕ. Çапла вара иртнĕ çул ял хуçалăхĕнче 713 çын, промышленноç отраслĕнче продукци тирпейленĕ çĕрте 609 çын, суту-илӳре, автотранспорт хатĕрĕсемпе тĕрлĕ техника хатĕрĕсем юсанă çĕрте 537 çын, патшалăх управленийĕнче тата çар хăрушсăрлăхне тивĕçтерессинче, социаллă страхованире 418 çын, вĕрентӳре 1161 çын, сывлăх сыхлавĕпе социаллă услугăсемпе тивĕçтерессинче 984 çын ĕçленĕ.

**– Предприятисемпе илес пулсан, çынсем йышлăрах вăй хуракан предприятисен шутне хăшсене кĕртмелле?**

– Кунта чи малтанах акционерсен «Шупашкарти «Сеспель» предприяти» хупă обществине асăнас пулать. Предприятире çултан-çул производствăна аталантарса пырассипе çине тăрса ĕçлеççĕ. Производство калăпăшĕ ӳссе пынă май вара ĕç вырăнĕсем те хушăнса пыраççĕ. Акă 2011 çулта кунта 398 çын ĕçленĕ пулсан, пĕлтĕр вĕсен хисепĕ 484 пулчĕ. Муркаш райпо тытăмĕнче 422 çын, Мăн Сĕнтĕр райпо тытăмĕнче 253 çын ĕçлет. «Моргаушимежрайгаз» филиалĕнче ĕçлекенсен шучĕ 176 çын, акционерсен «Муркашри кирпĕч завочĕ» хупă обществинче 150 çын шутланать.

**– Халĕ ĕç укçи çине куçар-ха. Отрасльсем тăрăх пăхсан çынсен уйăхри вăтам ĕç укçи виçи енĕпе куç умне мĕнлерех ӳкерчĕк тухса тăрать?**

– Иртнĕ çул пĕтĕмлетĕвĕпе районĕпе кашни çын пуçне тивекен уйăхри вăтам ĕç укçи шайĕ (пĕчĕк тата вăтам предпринимательство предприятийĕсене шутламасан) 14611 тенкĕ те 70 пуспа танлашнă. Республикăн вăтам кăтартăвĕ – 18320 тенкĕ те 40 пус. Район кăтартăвĕ республика кăтартăвĕпе танлаштарсан 79,8 процент чухлĕ пулать. Ял хуçалăх отраслĕнче ĕç укçи виçи пĕчĕк тетпĕр пулин те, коммуналлă, социаллă тата ытран паракан услугăсемпе тивĕçтернĕ çĕрте ĕçлекенсен вăл уйăхне вăтамран 8360 тенкĕ те 40 пус, вăл шутран канăва йĕркеленĕ çĕрте тата культурăпа спорт сферинче 8212 тенкĕ те 90 пус кăна пулнă.

Чи пысăк ĕç укçи виçи строительствăра пулни паллă – уйăхне вăтамран 38258 тенкĕ те 40 пус. Сăмах май вăл унччченхи çулхипе танлаштарсан 3 хут ӳснĕ. Кунта çавна палăртса хăварас пулать. Строительство ораслĕнче ĕçлекенсен вăтам ĕç укçи шайĕ тăрук ӳссе кайни район территорийĕнче федераллă трасса çинче юсав ĕçĕсем пурнăçлакан 905-мĕш номерлĕ «Хантымансийскдорстрой» строительство управленийĕнче вăй хуракан çул-йĕр строителĕсен кăтартăвĕсене шута илнипе çыхăннă. Промышленноç отраслĕнче продукци тирпейлекен производствăра вăй хуракансем уйăхсерен вăтамран иртнĕ çул 27176 тенкĕ те 70 пус, финанс ĕçĕхĕлĕнче вăй хуракансем 19579 тенкĕ те 10 пус, патшалăх управленийĕпе çар хăрушсăрлăхĕнче тата социаллă страхованире ĕçлекенсем 20630 тенкĕ те 30 пус ĕçлесе илнĕ.

**– Нина Марксовна, халĕ вара предприятисенче ĕç укçи шайĕ мĕн чухлĕ пулнине уйрăмшар палăртса хăварсамăр.**

– Ĕçлекен кашни çын пуçне тивекен уйăхри вăтам ĕç укçи виçи пĕлтĕр «Сеспель» предприятире 32398 тенкĕ, «Моргаушимежрайгаз» филиалĕнче 19293 тенкĕ, «Моргаушская» строительство организацийĕнче 16857 тенкĕ, Мăн Сĕнтĕр райповĕнче 15591 тенкĕ, Муркаш райповĕнче 14668 тенкĕ, Муркаш почтамтĕнче 13843 тенкĕ, Муркашри кирпĕч заводĕнче 13634 тенкĕ, «Моргаушавтотехсервис» предприятире 12967 тенкĕ, «Сундырь-Хлеб» предприятире 12500 тенкĕ, Муркашри пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕнче 11024 тенкĕ, Муркашри сĕт заводĕнче 7413 тенкĕ, «МирТрубПласт» предприятире 5981 тенкĕ, «Юлия» обществăра 5617 тенкĕ, «Моргаушкорм» предприятире 5392 тенкĕ пулчĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ**
**калаçнă.**

**Саламлатпăр**

Хорнуй ялĕнче пурăнакан хисеплĕрен те хисеплĕ **Нина Ивановна ЕРШОВĂНА** сумлă юбилей ячĕпе чĕререн тухакан ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, тумхахсăр кун-çул, вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Мăшăрĕн юратăвĕ, ачисемпе мăнукĕсен ăшши яланах вăй-хал парса тăтăр. Хĕвел пăхнă кунпа кашни кун савăнса пурăнмалла пултăр. Вĕсен хĕрĕн Эльвирăн мартăн 14-мĕшĕнче çуралнă кунĕ, ăна та ăшшăн саламлатпăр.

**Саламлаканĕсем: Хорнуй шкул коллективĕ.**

Оринин ял тăрăхĕнчи Патаккассинче пурăнакан **Светлана Германовна ВЯЗОВА** çак кунсенче 50 çул тултарчĕ. Хăйĕн пурнăçне ачасене вĕрентес ĕçе халалланă анне, хуняма, кукамай – пирĕншĕн те ялан ырă тĕслĕх. Пурнăçра ăна çăмăл пулманнине эпир паян ăнланатпăр. Çавăнпа малашне канлĕ пурнăç, çирĕп сывлăх, телей, вăрăм ĕмĕр сунатпăр.



Сан яту паян хисеплĕ –
Пултăр çавăн пек ялан.
Кĕрекӳ хаваслăн кĕрлĕ,
Ырă калĕ тус-тăван.
Çемьепе пĕрле сунатпăр
Çутă ĕмĕт те телей.
Кăмăлтан сана калатпăр –
Савăк иртгĕр юбилей!

**Саламлаканĕсем: ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрĕвĕ, мăнукĕ, хăти-тăхлачисем, тăванĕсем.**



Пирĕн юратнă та хаклă çыннăмăра – Муркашра пурăнакан **Валентина Васильевна ФЕДЬКИНĂНА** çуралнă кунĕ ячĕпе саламлатпăр. Эсĕ пирĕнпе юнашар пулнишĕн эпир савăнатпăр, тав сăмахĕ калатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, иксĕлми телей, ăнăçу сунатпăр. Эпир сана пурте юрататпăр, хисеплетпĕр, умри çулу санăн яланах анлă та çутă, такăр пултăр.

**Салампа: мăшăрĕ, ачисем, амăшĕ, пур тăванĕ.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă ырă кăмăллă аннене, хунямана, кукамая, тăванăмăра – Юнкă ялĕнче пурăнакан **Валентина Александровна ТОЙГИЛЬДИНĂНА** 50 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Тавах сана, çĕр çинчи чи хаклă çыннăмăр, эс пурришĕн, пире пурнăç парнеленĕшĕн. Пире, ачусене, çуратса тĕрĕс-тĕкел пăхса ӳстерсе пурнăç çулĕ çине кăларнăшăн тав тăватпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, юхан шыв пек вăрăм кун-çул, çăл куç пек тапса тăракан вăйхал, иксĕлми телей, савăнăç сунатпăр. Пурнăçу тулăх пултăр, сĕтелӳ апат-çимĕçрен ан татăлтăр, санпа юнашар яланах юратупа шанчăк, телейпе ăнăçу çӳречĕр, умра яланах çутă та ырă кунсем пулччăр, сăн-питре савăнăçлă кулă çиçсе тăтăр. Ĕмĕрӳ вăрăм пултăр. Пуриншĕн те тав сана, пирĕн юратнă хаклă çыннăмăр!

**Салампа: амăшĕ, ывăлĕ, 2 хĕрĕ, кĕрĕвĕ, мăнукĕ, çывăх тăванĕсем, хăтипе тăхлачи тата пускилсем.**

В.И. Чапаев ячĕпе хисепленсе тăракан кооперативри ĕçтеше – **Тамара Николаевна ТЕРЕНТЬЕВĂНА** 55 çулхи сумлă юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, ăнăçу, вăрăм кун-çул, çутă пурнăç сунатпăр. Ĕçĕрсем ăнса пыччăр, инкек-синкек вара сирĕнтен яланах пăрăнса иртгĕр, малашне те пире тутлă апат-çимĕçпе сăйласса шансах тăратпăр.

**Кооператив ĕçченĕсем.**

Пирĕн хаклăран та хаклă юратнă ырă кăмăллă анне, асанне, хуняма, хисеплĕ тăван – Хорнуй ялĕнче пурăнакан **Нина Михайловна ХМЕЛЕВА** мартăн 15-мĕшĕнче 75 çул тултарать. Юбилей ячĕпе эпир ăна ăшшăн саламласа юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Мĕн шутлани, ĕмĕтленни пурнăçланса пытăр. Пире малалла та тĕрĕс çул кăтартса пыма, кил ăшшине упраса пурăнма Турри сана нумай çул усратăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕпе хĕрĕсем, кинĕпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, тăванĕсем, хăти-тăхлачисем.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăра – Хуракасси выççăлккинче пурăнакан **Зоя Николаевна МАЙОРОВĂНА** çуралнă кунĕ ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, телей сунатпăр. Эсĕ пурри пирĕншĕн пысăк савăнăç. Эпир сана юрататпăр, хисеплетпĕр. Йывăр вăхăтра пире пулăшнăшăн, тĕрĕс çул çине тăратнăшăн тав сăмахĕ калас килет. Малашнехи пурнăçра вăрăм ĕмĕр, иксĕлми телей, канлĕ ватлăх сунатпăр.

**Салампа: ывăлĕпе кинĕсем, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем тата мĕн пур çывăх тăванĕ.**



Пирĕн юратнă та хаклă çыннăмăра, Патаккасси ялĕнче çуралса ӳснĕ, унтах пурăнакан **Светлана Германовна ВЯЗОВĂНА** 50 çулхи юбилейпа чун-чĕререн, ăшшăн саламлатпăр. Эсĕ пирĕн чи çывăх юлташ пулнишĕн эпир савăнатпăр. Паянхи пекех яланах хаваслă та ырă кăмăллă пул, чир-чĕр мĕнне ан пĕл, мĕн ĕмĕтленни çитсе пытăр.

**Саламлаканĕсем Музыковсемпе Максимовсем.**



Пирĕн хаклă çыннăмăра – Хуракасси выççăлккинче пурăнакан **Ирина Федоровна КИРПИЧНИКОВĂНА** 75 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Турри сана нумай пурăнма вăй-хал парса тăтăр, пулăшса пытăр. Эсĕ пирĕнпе пулнăшăн эпир яланах савăнатпăр, тĕреклĕрех туятпăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕ, 2 кинĕ, 5 мăнукĕ çемйисемпе, 2 кĕçĕн мăнукĕ, Никитинсен, Токаревсен, Пугачевсен çемйисем, тăванĕсем.**

# Килтен тухмасăрах паспорт илетпĕр

**Патшалăх услугисем**

«Патшалăх услугисем» (www.gosuslugi.ru) портал пирки чылайăшĕ илтнех ĕнтĕ. Анчах та вĕсенчен ытларахăшĕ ку сайтра регистрациленмен тата электронлă услугăсемпе активлă усă курмасть-ха. Кăлăхах, мĕншĕн тесен унпа усă курни чылай патшалăх, республика тата муниципаллă услугăсем илессине самай ансатлатать.

Чăваш Ен Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви хак панă тăрăх, иртнĕ çулхи çу кунĕсем тĕлне Раççей патшалăх услугисен пĕрлехи порталĕнче республикăра пурăнакан 10 пине яхăн çын регистрациленнĕ. Çак вăхăта вĕсен хисепĕ палăрмаллах ӳснĕ пулин те, цифрăсем ытлашши пысăк пулманни сайтра регистрациленессин кăткăслăхĕпе тата çĕннине алла илме тăхтаса тăнипе çыхăннă.

«Патшалăх услугисем» порталпа усă курса илме май пур услугăсен хисепĕ вара ӳссех пырать. Енчен те çулталăк каялла Чăваш Енре унпа 19 услугăпа усă курма май пулнă пулсан, халĕ ку услугăсен шучĕ – 69 (патшалăх услугисем 42 тата муниципаллă услугăсем 27).

Официаллă майпа www.gosuslugi.ru портал 2009 çулхи декабрĕн 15-мĕшĕнче ĕçлеме тытăннă, тепĕр çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнче ку услугăсене электронлă майпа илме май туса панă. Пĕтĕмпе вара «Патшалăх услугисем» порталта 4 миллион ытла çын регистрацилениĕ, 4 пин ытла электронлă услугăпа усă курма май пур (услугăсен хисепĕ регионран килет).

Хут çинче пĕтĕмпех илемлĕ пулин те, пурнăçра кăлтăксемсĕр мар. Чи малтанах порталта регистрациленесси тата авторизациленесси кăткăс пулнине палăртмалла. Хăш-пĕр услугăсемпе регистрациленмесĕр те усă курма май пур ĕнтĕ (калăпăр, врач патне çырăнма), çапах та портал май пур таран ытларах усă патăр тесен авторизациленмесĕр май çук.

Порталта икĕ тĕрлĕ регистрациленме май пур. Пĕрремĕшĕ – кирлĕ даннăйсене кĕртсе харпăр хăй компьютер урлă регистрациленесси. Тепĕр икĕ-виçĕ эрнерен эсир почтăран логин тата пароль кăтартнă заказлă çыру илетĕр. Иккĕмĕш мел – паспорт тата СНИЛС илмелле те акционерсен «Ростелеком» уçă обществин уйрăм çынсене йышăнмалли офисне пымалла (Шупашкар хули, Гагарин урамĕ, 20 а çурт). Кун пек чухне эсир портала кĕме тӳрех ирĕк илетĕр.

Кунсăр пуçне Чăваш Республикин патшалăх услугисен порталĕ пур (www.gosuslugi.cap.ru). Ăна 2010 çулта туса хунă. Унта хăш учреждениссем мĕнле услугăсемпе тивĕçтерни пирки пĕлме, услугăсемпе усă курма кирлĕ документсене илме пулать. Ку сайтпа услугăсене тӳррĕмĕн илме май çук.

Акă эсир регистрацилениĕ тейĕпĕр. Логин сирĕн харпăр хăй лицевой счечĕн страховани номерĕ (СНИЛС) пулать, парольне хăвăр суйласа илетĕр. Порталтан усăллине мĕн илме пултаратпăр-ха эпир?

Ют çĕр-шыв паспортне илесси – ытларах усă куракан услугăсен шутĕнче. Эсир сайта кĕретĕр, кирлĕ даннăйсене кĕртсе анкетăна тултаратăр, цифрлă сăн ӳкерчĕке вырнаçтаратăр (вăл документсен шалти çаврăнăшĕ валли кирлĕ, ăна килти условисенчех тума май пур). Сирĕн анкета тĕрĕслев витĕр тухать. Мĕнле те пулин тĕрĕс марлăх пур пулсан, ăна таврса параççĕ. Тепĕр темиçе кунтан сирĕн пата патшалăх пошлини тӳлемелли тата федераллă миграци службине пымалли пирки SMS е e-mail килет.

Ют çĕр-шыв паспортне «Патшалăх услугисем» урлă илнĕ чухне уйрăм черет пур (тĕрĕсрех каласан, вăл ытларах чухне çук). Федераллă миграци службин сотрудникĕ анкетăри даннăйсене чăн документсемпе тĕрĕслет, паспорт валли сире сăн ӳкерет те киле ярать. Тепĕр уйăхран эсир паспорт патне каятăр. Кăткăсси нимĕн те çук. Çапла майпах 20 е 45 çул тултарсан Раççей паспортне те улăштарма пултаратăр.

Ытларах сарăлнă тепĕр патшалăх услуги – водитель удостоверенине илесси е улăштарасси, автотранспорт хатĕрне регистрацилесси. Паспорт илнĕ чухнехи пекех эсир анкетăна тултаратăр, документсем йĕркеллех пулнине пĕлтернине кĕтетĕр, кайран вара хăвăрăн ГИБДД уйрăмне пыратăр.

Çак майпах мăшăрланнине е уйрăлнине, ача çуралнине е çын вилнине регистрацилениĕ чухне те заявлени çырмалли çак мелпе усă курма май пур. Унччен пулсан ертсе пыракан компанин паспортистки патне икĕ хут кайма тивнĕ. «Патшалăх услугисен» порталĕпе усă курнă чухне федераллă миграци службине пĕр хут кăна каймалла пулать.

Интернетпа врач патне çырăнма та май пур. Ку услугăпа та асăннă сайт урлă усă курма пулать. Анчах та Чăваш Енре врач патне çырăнма республикăра туса панă мелпе усă курма меллĕрех. Ăна www.med.cap.ru сайтра тупма пулать. Асăннă услугăн федераллă шайри мелĕпе усă курасси кăткăс та пăтрашăнчăкрах. Çавăн пек те пулма пултарать. Эсир акă терапевт патне çырăнас тетĕр, çав вăхăтрах вĕсем халĕ пĕтĕмĕшле практика врачĕсем ятлă тейĕпĕр.

«Патшалăх услугисем» портал урлă кирлĕ нумай информацие илме пулать: Пенси фондĕнчи лицевой счет пирки, ГИБДД штрафĕсем пурри пирки, тӳлесе татман налук парăмĕсем пурри пирки, хупăнман исполнительнăй производствăсем пурри пирки т. ыт. те.

Паян кашниех «Патшалăх усугисем» порталта хăйĕншĕн интереслине чылай тупма пултарать. Çавăнпа та эсир çак таранччен асăннă сайтра регистрациленмен пулсан çак ĕçе кая ан хăварăр. Электронлă услугăсемпе усă курни патшалăх учрежденийĕсене кайма чарса тăмасть. Ерипен пулсан та, Интернет тата патшалăх пирĕн пурнăçа меллĕрех тăваççĕ.

**М. ИВАНОВ.**

# Кăçал çĕнĕлĕхсем пур

## Ачасен сывлăхĕпе канăвĕ

Пирĕн районта ачасен сывлăхне çирĕплетме тата вĕсен канăвне йĕркелеме кăçал пурĕ 7 миллион та 340 пин тенкĕ уйăрнă. Вĕсенчен 3 миллион та 345 пин те 700 тенкĕ – шкулсем çумĕнчи лагерьсен ĕçне йĕркелеме, хула тулашĕнчи лагерьсене сывлăха çирĕплетме тата канма кайма – 3 миллион та 417 пин те 600 тенкĕ. Кунсăр пуçне ачасен канăвĕпе сывлăхне çирĕплетме майсем туса парассинче кăçал çĕнĕлĕх те пур – пĕрремĕш хут палаткăсен лагерĕсене йĕркелесси.

Шкулсем çумĕнчи сывлăха çирĕплетмелли, ĕçпе кану тата профиль лагерĕсене çӳрес текен ачасен ашшĕ-амăшĕсенчен заявкăсем йышăнас тапхăр пуçланнă ĕнтĕ. Шкул çумĕнчи сывлăха çирĕплетмелли тата ĕçпе кану лагерĕсенче пĕр смена 21 куна тăсăлать, профиль лагерĕсенче – 10 куна. Малтанласа палăртнă тăрăх пĕр ачана вĕри апатпа тивĕçтерме кунне 65–69 тенкĕ таран ларĕ. Шкулсенче асăннă лагерьсем ытларах июнь тата июль уйăхĕсенче ĕçлессине палăртнă.

Хула тулашĕнчи лагерьсем пирки калас пулсан малтанах пирĕн район çуркуннехи каникул вăхăтĕнче сывлăха çирĕплетекен «Чайка» санатори комплексĕпе тата «Чувашиякурорт» санаторийĕн çулталăкĕпех ĕçлекен «Жемчужина» лагерĕпе ĕçлеме палăртнине асăнса хăварас пулать. Малтанласа пăхнă тăрăх районти пуçламăш классенче вĕренекен ачасене çак лагерьсене икĕ тапхăрпа вунă кунлăх яма шутлатпăр: мартăн 25-мĕшĕнчен тата апрелĕн 4-мĕшĕнчен. Çак вăхăтра «Чайкăра» канмалли путевка хакĕ 5087 тенкĕпе танлашать, «Жемчужинăра» канма – 8000 тенкĕ. Çуллахи вăхăтра хула тулашĕнчи лагерьсенче канмалли путевка хакĕ вăтамран 10660 тенкĕ пулĕ. Анчах та пĕлтĕрхи пекех ашшĕ-амăшĕсем çуркуннехи каникулта е çуллахи вăхăтра ачана лагере яма туяннă путевка хакĕн 10–20 процентне кăна тӳлеççĕ.

Çуллахи вăхăтра ачана лагере ярас тесен ашшĕ-амăшĕн е саккунлă представителĕн заявлени çырмалла. Услугăпа тивĕçтерессине лайăхлатас тĕллевпе кăçал заявленисене шкулсенче йышăнма палăртрăмăр.

Палатка лагерĕсене ĕçлеттерессине çамрăк армеецсен «Зарница» тата «Орленок» виçĕ куна тăсăлакан вăййисене йĕркелессипе çыхăнтарнă. Кунсăр пуçне уйăрнă укçа-тенкĕне ОБЖ предмечĕн вĕрентӳ программипе пăхса хунă яшсен (10 класра вĕренекенсен) 5 кунлăх сборĕсене йĕркелессинче усă куратпăр.

Пĕлтĕр ачасен канăвне йĕркелессине районти вĕренекенсен 72 процентне явăçтарма май пулчĕ. Кăçал та çак хисеп пĕчĕк пулмасть.

**З. ДИПЛОМАТОВА,**
**район администрацийĕн вĕренӳ тата çамрăксен политикин пайĕн пуçлăхĕ.**

# Район администрацийĕн пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илме

**Шăмат кун, мартăн 16-мĕшĕнче** район администрацийĕн пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илессишĕн йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕ иртет. Вăл йăлана кĕнĕ вырăнта – йĕлтĕр базинче пулать.

Ăмăртакан командăсенче 18 çултан иртнĕ 2 арçынпа 2 хĕрарăм пулмалла. Эстафета çакăн пек йĕркепе иртет: 1-мĕш тата 3-мĕш тапхăрсем – хĕрарăмсем 1 çухрăм, 2-мĕш тата 4-мĕш тапхăрсем – арçынсем 3 çухрăм йĕлтĕрпе чупаççĕ. Çавăн пекех ертӳçĕсем (вĕсен çумĕсем) те йĕлтĕр сырса старта тухаççĕ. Вĕсен дистанцийĕ – 1 çухрăм.

**Ăмăртăвăн условийĕ çапла:** предприятисемпе организацисен, учрежденисен, район администрацийĕн структура подразделенийĕсен тата учительсен командисенче асăннă вырăнсенче ĕçлекенсем кăна пулмалла; ял тăрăхĕсен командисенче ял тăрăхĕнче пурăнакансем е унта çуралса ӳснисем кăна пулма пултараççĕ.

Пĕтĕмлетӳсем виçĕ ушкăнра пулаççĕ. Пĕрремĕш ушкăнра – ял тăрăхĕсен тата район администрацийĕн пайĕсен командисем, иккĕмĕшĕнче – предприятисен, организацисемпе учрежденисен командисем, виççĕмĕшĕнче – учительсен командисем.

Ăмăрту 11 сехетре пуçланать. Пурне те йĕлтĕр йĕрĕ çинче кĕтетпĕр!

**Йĕркелӳ комитечĕ.**

## Тӳрлетни

Район хаçачĕн пуш уйăхĕн 7-мĕшĕнче пичетленнĕ 16-мĕш номерĕнче журналист айăпĕпе район администрацийĕн 2013 çулхи нарăс уйăхĕн 14-мĕшĕнчи 158 номерлĕ йышăнăвĕпе район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă ĕçченсен списокĕнче йăнăш кайнă: Е. Андреев яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн выльăх-чĕрлĕх уйрăмĕн пуçлăхне Александр Владимирович ВАСИЛЬЕВА тени вырăнне **Александра Владимировна ВАСИЛЬЕВĂНА** тесе вуламалла.

**Хаçат редакцийĕ.**

## Ĕç рынокĕ

# Ярмăрккăсем иртнĕ

Ĕç рынокĕнчи йывăрлăха сирес тата ĕç шыракан граждансене кĕске вăхăтра ĕç тупса парас тĕллевпе районти ĕçпе тивĕçтерекен центр тăтăшах ваканси ярмăрккисем ирттерет. Ĕç тупас ыйту çивĕч пулнине кура кăçал та ĕçпе тивĕçтерекен центр 2 ярмăрккă ирттерчĕ. Унта 4 организаци тата 14–18 çулхи 60 çамрăк хутшăнчĕç. Ярмăрккă хыççăн çамрăксене вăхăтлăх ĕçпе тивĕçтерме май пулнă.

**Хамăр инф.**

# «Ăнăçлăх» ăнăçуллисене палăртрĕ

## Конкурс



Маттур хĕрарăмсем пурăнаççĕ Муркаш районĕнче: хастар та правур, вăйлă та ырă кăмăллă, çав вăхăтрах çепĕç те черчен вĕсем. Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунне халалласа ирттернĕ «Ăнăçлăх» конкурс çакна тепĕр хут çирĕплетрĕ.

Конкурсăн пĕрремĕш тапхăрне хĕрарăмсем хăйсен портфолиосене хаклава тăратрĕç. Чăнах та темĕн чухлĕ тата темĕн тĕрлĕ çитĕнӳ тунă вĕсем, ăнăçуллă та тăрăшуллăскерсем. Пĕрремĕш тапхăрта кашни ял тăрăхĕнчи хĕрарăмсен канашĕ малалла хутшăнма тивĕçлисене суйласа илчĕ. Çапла вара хĕрарăм çинчен каласа паракан видеосюжетсем е презентацисем те пĕрремĕш тапхăр хыççăн Муркаша «çитрĕç». Иккĕмĕш тапхăра районти 10 хĕрарăм хутшăнчĕ.

Л. Тарасова ертсе пыракан хĕрарăмсен районти канашĕ тăрăшнипе конкурс интереслĕ те хаваслă иртрĕ: хĕрарăмсем хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарнă май залра ларакансем валли уяв концерчĕ йĕркелерĕç тесен те тĕрĕс пулать. Ал ĕç тума та, кукăль-çăмах пĕçерме те, ташă-юрăра та ăста вĕсем. «Турă хĕрарăма вăй, черченлĕх, ырă кăмăл, илем çителĕклех панă, мĕншĕн тесен унăн тивĕçĕ нумай: ачасене, мăшăра юратмалла, чирлисене пулăшмалла, çемье ăшшине упрамалла», – çакăн пек хайлава аса илнĕ май Лилия Юрьевна хĕрарăмсене яланах илемлĕ пулма сĕнчĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев та хĕрарăмсем пур ĕçре те маттур пулнине палăртса яланах ăнăçуллă пулма сывлăх сунчĕ.

Уйкас Янасал ял тăрăхĕнчен конкурса хутшăнакан Елена Николаева уйрăм предприниматель чăн-чăн ал ĕç маçтăрĕ: вăл çиппе те, вĕтĕ шăрçапа та тĕрлеме питĕ ăста. Хăйĕн ал ĕçĕсемпе республика конкурсĕсене те, куравсене те пĕрре мар хутшăннă. Ачалăхĕпе çамрăклăхне хулара ирттернĕ хĕрарăм вара конкурсра чăваш халăх юррине шăрантарса кăмăла тата ытларах çавăрма пултарчĕ.

Муркаш ял тăрăхĕнчен конкурса «Солнышко» ача-пăча садĕнче вăй хуракан Ольга Петрова воспитатель хутшăнчĕ. Вăл – район, республика тата Раççей шайĕнчи чылай конкурс призерĕ тата çĕнтерӳçи. Хăй вăхăтĕнче ЧР Президенчĕн стипендине те тивĕçнĕ. «Шуракăш» юрăпа ташă ансамбльне хаваспах çӳрет, илемлĕ юрлать кăна мар, сăвăсем те калăплать, гитарăпа та вылять.

Çатракасси ял тăрăхĕнчи Олимпиада Сурикова та ача-пăча садĕнче тăрăшать. Пултаруллă воспитатель чылай конкурса хутшăнса малти вырăнсене йышăннă. Кунсăр пуçне паян вăл Кашмашри Культура çурчĕ çумĕнчи художество пултарулăх ушкăнне çӳрет. Çакăнпа пĕрлех кукăль пĕçерме пит ăста пулнине те палăртрĕç унăн хĕр тантăшĕсем.



Оринин ял тăрăхĕнчи Вера Вершкова вара хăйĕн пурнăçĕнче çут çанталăк пысăк вырăн йышăннине палăртать. Вырăнти шкулта техслужащире вăй хураканскер хăйсен кил хуçалăхĕн илемĕпе хăтлăхĕшĕн те тăрăшать. Ахальтен мар ĕнтĕ вĕсен хуçалăхĕ иртнĕ çулхи конкурсра чи лайăххисен йышне кĕме пултарнă. Чăмăш ял историне пухассипе те тахçантанпах тимлет хĕрарăм.

Хорнуй ял тăрăхĕнчи Маргарита Исаковăпа Зоя Купцова та конкурса хутшăнма тивĕçнĕ. Маргарита Михайловна ĕç ветеранĕ, тивĕçлĕ канура, апла пулин те «Путь Ильича» агрофирмăра тăрăшать. Зоя Геннадьевна ял тăрăхĕнчи хĕрарăмсен канашне ертсе пырать.

Юнкă ял тăрăхĕнчен конкурса Людмила Кудряшова хутшăнчĕ. Вырăнти Культура çурчĕн директорĕ эстрада юррисене юрлама кăмăллать, пĕлтĕр акă республикăри «Çĕнĕ ятсем» конкурсра çĕнтерме пултарнă. Кунпа пĕрлех вăл ачасене те ташлама вĕрентет. 2009 çулта вара Кудряшовсен çемйи республикăри «Çулталăк çемйи» конкурсра та çĕнтернĕччĕ.

Ярапайкасси ял тăрăхĕнчен «Ăнăçлăх» конкурса Наталия Борзаева тата Лира Кудашова хутшăнчĕç. Иккĕшĕ те Шурчари тĕп шкулта вăй хураççĕ. Наталия Вячеславовна аслă вожатăй ĕçĕпе пĕрлех çамрăк çемьесен клубне ертсе пырать, çемйипе тĕрлĕ конкурссене хутшăнма кăмăллать. Çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тăвать Борзаевсен çемйи. Лира Николаевна – шкул директорĕ. Унăн та ӳсĕмĕсем курăмлă: çемье конкурсĕсенче те, професси ăсталăхĕн конкурсĕсенче те малти вырăнсем сахал мар.

Ярославка ял тăрăхĕнчен килнĕ Олеся Дмитриева та ача-пăча садĕнче ĕçлет. Пултаруллă хĕрарăм вырăнти хор ушкăнне хаваспах çӳрет иккен. Районти спорт конкурсĕсенче те Дмитриевсен çемйи пĕрре мар малти вырăнсене тивĕçнĕ.

Çакăн пек хастар хĕрарăмсем пулчĕç жюри умĕнче. Жюри членĕсем вара, унта Л. Тарасовăсăр пуçне ыттисем пурте арçынсем пулнăран пулĕ, пĕтĕмлетӳпе нумай кĕттермерĕç. Хĕрарăма хакласси арçынсемшĕн çăмăлах пулман-мĕн: кашни пике хăйне май илемлĕ, пултаруллă. Çавăнпах пикесене кашнин валли ятарлă номинаци тупса чысларĕç. Кунпа пĕрлех жюрире пулнă А. Куликов, районти ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ – «Сывлăх» ФСК директорĕ, хĕрарăмсене спорт комплексне çӳреме ятарлă сертификатсем парса хавхалантарчĕ. «Моргаушское» пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертӳçи С. Тимофеев тата ЧР патшалăх ветеринари надзорĕн районти тĕп инспекторĕ О. Воробьев та хĕрарăмсене ăшă сăмахсемпе саламларĕç.

Уяв вĕçлениччен вара Ростислав Николаевич хĕрарăмсем политика пурнăçĕнче те активлă пулнине палăртса «Единая Россия» партин регионти уйрăмĕн Тав çырăвĕпе Çатракассинчи «Березка» ача-пăча садĕнче вăй хуракан Лариса Федорова воспитателе тата «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçатăн электронлă наборпа верстка операторне Алина Беловăна чысларĕ, парнесем парса хавхалантарчĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: жюрие çăмăл килмерĕ; акă вĕсем – пултаруллисем.**

# Янкăр хĕвелĕ уява йыхравларĕ

**Хĕле ăсатрăмăр**



**Васкассинчи информаципе культура центрĕн ертӳçи Н. Ильина. Вăл ертсе пыракан ушкăн – конкурс çĕнтерӳçи.**

Мартăн 9-мĕшĕнче Муркаш салинчи «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕ тавра халăх йышлăн пухăнчĕ. Кунта хĕл ăсатăвĕн уявĕ иртрĕ. Çанталăкĕ ирĕн-каçăн сивĕ тăрать пулин те çак кунхи кăнтăрлахи янкăр хĕвел тата тӳлек çанталăк çуркунне çитнине систерчĕ, уява йыхравларĕ. Тепĕр тесен унăн саккунлă прави вĕт халĕ. Çавна тĕпе хурса çак тапхăрта хĕле ăсатасси тата çуркуннене кĕтсе илесси пирĕн районта ырă йăлара ĕнтĕ.

Анлă уяв Муркашри культура центрĕ çумĕнчи «Муркаш» фольклор ушкăнĕн композицийĕнчен пуçланчĕ. Камитçăсем «Çуркунне çитрĕ – хапхăрсене уçăр» савăнăçлă программăпа пĕтĕм халăха тĕп тӳремелле йыхравларĕç. Уйрăмах ача-пăча хĕвĕшрĕ вĕсене курсан.

Уява официаллă майпа район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев уçрĕ:

– Хисеплĕ çыннăмăрсем, эсир ĕçре те маттур, уявра та пит сатур. Пĕрлехи тăрăшулăхпа ума лартнă тĕллевсене пурнăçларăмăр. Халĕ вара пирĕн умра татах та пысăкрах ĕç-хĕл. Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Патшалăх Канашне тата халăх патне янă «Тăван ен ырлăхĕшĕн тăрăшса ĕçлер, саккуна пăхăнса, таса чунпа пурăнар» Çырăвĕнчи задачăсене пурнăçа кĕртмелле. Ку вăл – çутă малашлăха тунă çирĕп утăм. Паянхи уяв вара кĕçех çурхи ĕçсем çитессине те систерет, – терĕ Ростислав Николаевич саламласа тата ĕçлеме хавхалантарса.

Савăнăçлă самanta тăснă май кунта пухăннисене Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ В. Мидуков саламларĕ, Муркашри тĕп больницăн врачне Г. Федотовăна «Пĕрлĕхлĕ Расçейĕн» Чăваш регионĕнчи уйрăмĕн Тав çырăвĕпе чысларĕ. Çавăн пекех ытти саламсем те пулчĕç.

Юрă-ташă, шӳт-такмак – уявăн чăн-чăн палли тата илемĕ. Çапла вара ял тăрăхĕсенчи пултарулăх ушкăнĕсем пĕрин хыççăн тепри сцена çине тухрĕç, «Çуркунне çитрĕ. Чун савăнать» конкурсра вĕсем хăйсен ăсталăхĕпе паллаштарчĕç, кашниех маттур-çке. Ырă йăлана кĕнĕ тăрăх асăннă конкурс çĕнтерӳçи ята Уйкас Янасал ял тăрăхĕнчи Васкассинчи информаципе культура центрĕ çумĕнче йĕркеленĕ художество пултарулăх ушкăнĕ тивĕçрĕ. Иккĕмĕш вырăнта – Мулкачкассинчи «Пучах» ушкăн, виççĕмĕшсем вара Муркашсем пулчĕç. Çавăн пекех Çурлатринчи, Кашмашри тата Турайри Культура çурчĕсенчи артистсем савăк кăмăл парнелерĕç уява пухăннисене.

Хут купăсçăсене те тав тăвас килет уява илемлетме пулăшнăшăн. Юррапа кĕвве чĕрĕлĕх сĕмĕ кĕртекенсем çаксем пулчĕç: А. Семенов, Н. Кондукторова, П. Борзаев, А. Аникин.

Ача-пăча вара карусель тавра хĕвĕшрĕ, кашниех çил кăларса ярăнма пикенчĕ. Уяв, паллах, тутлă апат-çимĕççĕр иртмест. Кунтах вĕри икерчĕпе, чейпе тата ытти техĕмлĕхпе сăйланма май килчĕ. Ырă кăмăллă та капăр тумлă сутуçăсем тĕрлĕ тавар сĕнчĕç туянакана.

Епле-ха тата хыçлă çунасем çинче тĕрлĕ эрешсемпе илемлетнĕ лашасемпе катаччи чупмасăр? Хĕл ăсатăвĕн уявĕ, паллах, вĕсемсĕр кичем пулнă пулĕччĕ. Çичĕ янавар пĕрин хыççăн тепри илемлĕн юртса пычĕ, кăмăл тăвакансене ярăнтарчĕ. Хăшĕ-пĕри вĕсене ӳкерчĕк çинче кăна курнă пулсан, кунта унăн илемлĕ çилхине тытса пăхма та пултарчĕ. Çавăн пекех юлан ут çинчи Хĕл Мучипе Юр Пике тыткăнларĕç кунта пухăннисене, вĕсем район çыннисемпе тепĕр çулччен сыв пулларĕç.



**Хĕл Мучипе Юр Пике тепĕр çулччен сыв пулашрĕç.**

Уяв тĕрлĕ ăмăртусемпе татах та пуянланчĕ. Çапла вара Муркашсем спортпа туслă пулнине аван курса-туйса тăтăмăр. «Сывлăхра» сывă пурнăç йĕркине кăмăллакансем, вĕсене хавхалантаракансем пухăнчĕç. Кунта Муркаш районĕн Хисеплĕ гражданинĕ, патшалăхăн тата обществăлла деятелĕ К. Валицкая парнисене çĕнсе илессишĕн хĕрарăмсен вун пĕр команди хушшинче волейбол ăмăртăвĕ иртрĕ. Ăна кăçалхипе виççĕмĕш хут иртterчĕç. Спорт вăййинче тупăшакансене район пуçлăхĕ И. Николаев саламларĕ, ăнăçусем сунчĕ. Асăннă комплексра туслăх хуçаланчĕ, вăлах çĕнтерме хавхалантарчĕ. Çапла вара Мăн Сĕнтĕр райповĕн команди чи пултарулли пулчĕ. Иккĕмĕш вырăна «Оринино» хуçалăх спортсменĕсем тухрĕç. Виççĕмĕшсем – МСО «Моргаушская» команди.

Çавăн пекех мини-футбол ăмăртăвĕ иртрĕ. Унта вун пĕр команда вăй виçрĕ. Пĕрремĕш – Çатракасси ял тăрăхĕ, иккĕмĕш вырăна Йӳçкасси ял тăрăхĕ (Актай), виççĕмĕш вара «Сывлăх» ДЮСШ пулчĕ.

Хоккей вăййине кăмăллакансем пăр çинче ăмăртрĕç. Тупăшăва виçĕ команда хутшăнчĕ. Чи пултаруллисем Юнка спортсменĕсем пулчĕç, иккĕмĕш вырăнта – Сыпайсем, виççĕмĕшне Калмăккассисем тивĕçрĕç.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**



**Ача-пăча карусель тавра хĕвĕшрĕ, вăхăта савăнăçлă ирттерчĕ.**



**Сывă пурнăç йĕркине кăмăллакансем.**



**Иккĕмĕш вырăн тивĕçнĕ Мулкачкассинчи «Пучах» ушкăн.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

# Çăварни пуçланчĕ! Савăнар пĕрле!

**Мăн Сĕнтĕрти хĕл ăсатăвĕн уявĕнчен**



**Вомпăкассинчен килнĕ Л. Иванова район администрацийĕн пуçлăхĕпе Р. Тимофеевпа та, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсемпе В. Мидуковпа тата Н. Ванеркинпа та умри ыйтусене сӳтсе явма май тупрĕ.**



**Мăн Сĕнтĕр библиотекин ĕçченĕ Татьяна Ефимова çуркунне сăнарне халăх умне кăларчĕ, уява килнисене çăкăр-тăварпа кĕтсе илчĕ.**

Пирĕн тăрăхри хĕл ăсатăвĕ ытларах чух халăхăмăр савăнăçлă паллă тăвакан Çăварни уявĕсемпе тӳр килет. Асăннă уяв вара чăваш çыннин пурнăçĕнче пысăк пĕлтерĕшлĕ. Халăхăмăр культуринче Çăварни уявне хĕвеле чысланă праçник тени те пур. Çăварни çитрĕ пулсан çур акиччен шутлă кунсем юлаççĕ. Çавăнпа та хĕвел Турринчен канлĕ те вăхăтра акмалартма юрăхлă çанталăк ыйтни теме те пулать çак кунхи савăнăçа. Авалтанпа Çăварнире ял çыннисем икерчĕ пĕçернĕ, ăна активне хăна-вĕрле пуçтарнă, иртен-çӳрене хăналанă, пĕрле савăннă.

«Çăварни уйăх çавраннă вăхăтра пулать. Аслă çăварни – кивĕ уйăхăн юлашки вырсарни кунĕнче. Кĕçĕн çăварни – çĕнĕ уйăхăн пĕрремĕш вырсарникунĕнче», – вĕрентсе калатчĕ анне хамăр аче-пăча чух çурхи хĕвел ăшшинче. Пурнăç иртнĕçемĕн анне калани вăй илсе пычĕ, унăн пĕлтерĕшĕ те ӳсрĕ. Çапла вара тунти кун, пуш уйăхĕн 11-мĕшĕнче, 23 сехет те 51 минутра уйăх çавранчĕ. Апла пулсан хăйĕн йĕркипе иртнĕ вырсарни кун Аслă çăварни кунĕ пулчĕ. Мăн Сĕнтĕр тăрăхĕнче ăна савăнăçлă паллă тавас ĕмĕтпе шăпах çак кун хĕл ăсатăвĕн уявне паллă турĕç. Çапла вара пуш уйăхĕн 10-мĕшĕнче Мăн Сĕнтĕрте ырă йăлана пăхăнса халăхăмăр йăли-йĕркипе «ял тавра» хĕвеле майлă лашапа катаччи чупни те, ăстаçăсем уява пынисене вĕри икерчĕпе хăналани те, уяв çитнине ташă-юрăпа паллă туни те, спорт ăмăртăвĕсенче чыслани те, асаттесен йăлипе «çăварни карчăкне» вут тивертсе çунтарни те пулчĕ. Пĕр сăмахпа каласан Мăнсĕнтĕрсем тӳперен вĕçекен юр пĕрчисемпе тата хĕлĕн юлашки сиввисемпе тупăшсах тулли савăнăçпа хĕле ăсатрĕç, ырă шанчăкпа çуркуннене кĕтсе илчĕç.

– Тепĕр эрнерен Аслă типĕне кĕретпĕр. Çавăнпа та савăнар-и-ха паян тулли хăватпа ăна хатĕрленсе, – тĕл пулсан савăк куллине пытармасăр аллине тăсса пачĕ Ильинкăри вăтам шкул вĕрентекенĕ Игорь Каргин. Кĕçех пирĕн савăнăç вĕри икерчĕпе уява тухнă вуншар çынпа пĕрле уяв сĕтелĕ хушшине вырнаçрĕ.



**Уяв илемĕ – хут купăссăсемпе балалайка ăстинче. Вĕсен кĕвви-çемми нумайăшне ташша кăларчĕ, юрă юрлаттарчĕ. Сăн ӳкерчĕкре (сулахайран сылтăмалла): Родион Петров, Виталий Егоров, Валерий Краснов, Александр Иванов.**

Пирĕн кĕрекене лекнĕ Çĕн Шоккăнта пурăнакан 83 çулхи Зинаида Петровскаяпа уява Тяпакассинчен килнĕ 64 çулхи Юлия Сорокина Çăварнине халăх йышлă тухни пирки, çак йăла Мăн Сĕнтĕрте авалтан пыни çинчен калаçу пуçарчĕç. «Çулсен лавĕ пысăк пулсан та çамрăклăха аса илтерекен çак уявран пирĕн те юлас килмерĕ. Тавах район администрацине, Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхне çак ырă йăлана тытса пынишĕн», – терĕç икерчĕ çинĕ май питри савăнăç шевлине пытармасăр маннăн çĕнĕ пĕлĕшсем, ĕç ветеранĕсем.

Эпир калаçса ларнă хушăра кафе умĕнче автомашина прицепĕ çинче йĕркеленĕ сцена çине уява ертсе пыракансем тухрĕç. Кунта Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи культура сферинче ĕçлекенсем хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç. Пасар лапамĕнчи Çăварни уявĕ вырăнти артистсем «Савăнар пĕрле, Çăварни килет!» театрализациленĕ тĕл пулуран пуçланчĕ. Сцена çинчисем те савăнăçлă, уява килнĕ халăх сăнĕнче те – кашнийĕнех йăл кулă. Пурте пĕр-пĕрне савăк кăмăлпа «Уявпа саламлатăп!» тесе йăл кулă парнелеççĕ. Хут купăс, баян, балалайка çеммисемпе тата репродуктортан янăракан кĕвĕпе ватти те, вĕтти те ушкăнсене пухăнса ташша тухаççĕ, хастартартараххисем хăюсăртараххисене астарса такмаксемпе шахвăртаççĕ.

– Уйрăм предпринимательсен хастарлăхне курса тăнăран хамăр магазинсемпе буфетсене те уява кăлартăмăр. Ара, хамăр пайщиксен уявĕ-çке, – сутуçăсенчен вĕри чей те кофе пуррипе кăсăкланать пасар лапамне пырса çитнĕ Мăн Сĕнтĕр райпо правленийĕн председателĕ Л. Майкова. Çывăхра тăракан хĕрарăмсемпе арçынсем суту-илӳ хăйсене тивĕçтерни пирки тупăшсах калама пуçларĕç. Людмила Петровна куçĕнче палăрнă кулă та унра уяв туйăмĕ çĕкленнине çирĕплетрĕ.



**Хĕл ăсатăвĕнче илемлĕ тумланнă аслисем те, çамрăксем те савăнăç хăвачĕпе тулли пулчĕç.**

Çак вăхăтра район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсем Н. Ванеркинпа В. Мидуков халăх хушшине пырса тухрĕç. Уяври арçынсем тупăшса тенĕ пек ертӳçĕсене алă парса сывлăх сунма пуçларĕç.

Уява пухăннисене Хĕл хăйĕн сивĕ кунĕсем тĕлĕшпе пĕтĕмлетсе калаçнă хыççăн сцена çине Çуркунне тухрĕ. Паян сиврех-ха, анчах кунсем вăрăмланнă май вăл та кĕçех вăй илĕ. Мăн Сĕнтĕрти библиотекарь Татьяна Ефимова çуркунне сăнарне халăх умне çитернĕскер, уява килнисене çăкăр-тăварпа кĕтсе илчĕ. Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Анатолий Лаптев уява пынисене саламланă май пухăннисене килсе çитнĕ хăнасемпе паллаштарсан вĕсем те уяв сцени çине хăпарчĕç.

– Вăхăт уттине чарма çук. Анчах Çĕнĕ çул уявларăмăр, паян вара хĕл ăсататпăр. Кăнтăртан килсе çитнĕ кураксем – çуркуннен пĕрремĕш паллисем. Апла пулсан паян пирĕн уяр та меллĕ кунсен кашни сехечĕпе туллин усă курса çурхи ака-сухана хатĕрленмелле. Çакă никамшăн та вăрттăнлăх мар пулсан та, паянхи ĕçе ырана хăвараканшăн вăхăтра пурнăçламан ĕç хакла ларма пултарать. Кун пирки те паян кашнийĕнех шухăшламалла, – терĕ пухăннисене хĕл ăсатăвĕн уявĕпе саламласа тата умри тĕллевсене палăртса Ростислав Николаевич.

В. Мидуковпа Н. Ванеркин депутатсем вара ял çыннисене патшалăх пулăшăвĕпе анлăрах усă курма тăрăшмалли пирки пĕлтерчĕç.

– Патшалăх пулăшăвĕпе тĕллевлĕ усă курас тесен патшалăх программисемпе килĕшӳллĕн ĕçлемелле. Ĕçлекен çын нихăçан та пулăшусăр юлмасть, – терĕ Николай Григорьевич хăйĕн кĕске сăмахĕнче çывăхаракан çур акире ăнăçусем сунса.

Владимир Петрович та уява тухнисене çĕнĕлĕхсенчен хăрамасăр вĕсене хăвăртрах алла илмелли пирки каларĕ.

Уяв саламĕсем хыççăн сцена çине художество пултарулăх ушкăнĕсем пĕрин хыççăн тепри хăпарчĕç. Мăн Сĕнтĕрти Культура çуртĕ çумĕнчи «Янаш» ушкăнăн номерĕсем, Вомпăкассинчи «Илемпи» ушкăн артисчĕсен пултарулăхĕ, Шупуçĕнчи «Çăлкуç» ушкăн ташши-юрри курма пынисене пĕр вырăнта тăратмарĕç.

– Артистсен пултарулăхĕ пирĕн урасене те ташша йыхăрать. Епле чăтса тăрăн кунта! – савăнăçне пытармасăр тăмарĕ вăтам çулсенчи Н. Портнова куракан.

Тренккăсем сцена çине хăпарсан пасар лапамĕнче савăнăç хумĕ чи çӳллĕ шая çитрĕ. Пĕр номерĕ тепринчен пахарах пулчĕ Ильинка тăрăхĕсен.

Черетпе халăх умне хăйсен ташши-юррипе тухнă Шомиксен те, Москакассисемпе Калайкассисен те çак кун художество пултарулăхĕнчи чи ăнăçлă кунсем пулчĕç пулас. Курма пынисем вĕсемпе пĕрле юрлани-ташлани ялти артистсен хавхаланăвне çĕклерĕ çеç. Кунпа пĕрлех уяв илемĕ те куç умĕнчех ӳсрĕ.

Пасар лапамĕнче юрă-ташă янăранă хушăра Мăн Сĕнтĕр тăрăх илемлетнĕ лашасем катаччи чупни никама та пĕр вырăнта хăвармарĕ.




**Чечексем – çуркуннен ытарайми илемĕ.**

Пур çĕре те ĕлкĕрес текенсем Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулăн спорт залĕнче иртнĕ спорт вăййисене çитсе курма та тăрăшрĕç. Мини-футбол, вĕрен туртни, кире пуканĕ çĕклени т. ыт. те çак кун уявăн тулли енĕсем пулчĕç.

Хĕл ăсатăвне хастар хутшăннисем вара киле парнесемпе таврăнчĕç. Пысăк-и вĕсем е пĕчĕк, анчах вĕсене хĕл ăсатăвĕн уявĕнче çĕнсе илни паха пулнине кашни коллективрах усăмлă палăртрĕç.

Мĕнех, хĕл ăсатрăмăр, Çăварние малалла уявлатпăр. Апла пулсан тыр-пул ăнса пултăрччĕ те выльăх-чĕрлĕх сывлăхпа пурăнтăр, ӳт хуштăр та йыш патăр!

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Обществăлла выльăх-чěрлěх патěнче ěçлекенсен 2012 çулхи ěç кăтартăвěсемпе irттернě канашлуран

# «Ăнăçу чикки пěр вырăнта ан юлтăр»

***Çапла каларě канашлу пуçланиччченхи кěске калаçура «Оринино» ял хуçалăх производство кооперативěн Патаккассинчи сěт фермине ертсе пыракан Раиса Блинова. Ěçлекен çапла калани вăл хăйěн ěçне аван пěлнине систерет. Çавăнпахтăр обществăлла выльăх-чěрлěх пăхакансен иртнě çулхи ěçне пěтěмлетсе irттернě район канашлăвě те кăçал шăпах асăннă ферма ěç-хěлěпе паллашнинчен пуçланчě. Асăннă ěç коллективěнче обществăлла выльăх-чěрлěхе пысăк çухатусемсěрех хěл каçарасси паян пěрремěш утăмсенченех никама та иккěлентермерě. Хуçалăхри ěнесем çак куна 12,8 килограмм сěт антараççě. Ку вăл районти вăтам кăтартуран 1,1 килограмм нумайрах. Ěнесен кěтěвě те Патаккассинче ытти çěртисенни пек пěчěкленмен, унчченхи çулхисен шайěнчех: 205 пуç.***

**КАНАШЛУ УМĚН**

«Çын ěçпе илемлě», – тет ваттисен сăмахě. Çак чăнлăх пурнăçра тăтăшах ума тухса пырать. Ěçлекен тăрăшулăхě яланах ыррине, çěннине шантарать, хăватлăрах ěçлеме хавхалантарать. Пěрин мал туртăмлă ěçне тěслěхе илсе ыттисене воспитани парассине Муркаш енре нихăçан та иккěмěш вырăна хăварман, хăвармаççě те, ěçшěн тивěçлě хаклассине те йăларан кăлармаççě. Халě калани «Оринино» ял хуçалăх производство кооперативěнче те яланах кун йěркинче. Район администрацийěпе ял хуçалăх пайě çулленех иртнě ял хуçалăх çулěнчи ěçсене тишкерсе обществăлла выльăх-чěрлěх патěнче ěçлекенсене тивěçлипе чысласси кун йěркинче тытни те Муркаш тăрăхěнче экономика аталанăвěшěн тăрăшакансем пирки самантлăха та манманни пирки калать. Кăçал çак пěтěмлетŭ пуш уйăхěн 6-мěшěнче «Оринино» хуçалăх территорийěнче иртрě.

– Хамăр тăрăшулăх çумне патшалăх пулăшăвне хушсан аталану çулне алăран вěçертместпěрех. Иртнě çу кунěсенче тăрăшсах выльăх апачě янтăларăмăр, унăн пахалăхě пирки тимлерěмěр. Çěнěлěхсене алла илсе пěлтěр нумай сарайěнче юсав ěçěсем irттертěмěр. Сěт пахалăхěшěн тăрăшсах çěнě сěт линине хута ятăмăр. Çакă йăлтах – хуçалăх ěçченěсен ěç кăтартăвě, пирěн малашлăх утăм. Хамăр ěмěтленни пурнăçа кěрсе пынишěн эпир савăнатпăр, – терě хăнасене Патаккассинчи сěт комплексěнчи выльăх сарайěсемпе ертсе çŭренě май «Оринино» ял хуçалăх производство кооперативěн ертŭçи Ю. Шишокин.

Ěне ферминче хěле хатěрленсе юсав ěçěсем ирттерни тата сěт линине çěнěрен вырнаçтарни тŭрех куç умне пулчě. Кунпа пěрлех фермăра вăй хуракансен те ěçлес туйăмě начар мар. «Свобода» хуçалăхăн Кашмашри ěне фермине 16 çул ертсе пыракан Ю. Петровский кашни çěнěлěхпех çывăхарах паллашма тăрăшрě. «Кŭршěсен мал туртăмлă ěçě-хěлě мана паян савăнтарать кăна. Вěсем выльăхсене ăнăçлă хěл каçарассипе тата продуктивлăха тивěçлě шайра тытассипе тěллевлě ěçлени фермăра кашни утăмрах сисěнет», – терě Юрий Анатольевич Патаккассисен çěнě сěт линийěпе паллашнă май.

– Çěннине тăтăш вěренмеллине, ыранхи куна пăхса ěçлемеллине, малашлăхшăн тăрăшмаллине пирěнтен пурнăç ыйтать. Çакна эпир хамăр çинче туятпăр. Хамăр хуçалăхăннипе пěрлех районăмăрăн экономикине те малалла уттарасси – пěрлехи тивěç, – терě калаçăва тытса пырса ферма заведующийě Р. Блинова.

«Оринино» хуçалăхри пек çěнěлěхсем малашне районта ытларах пуласса шанса сарай-витесемпе иртнě чух тирпей-илем те куç айккинче юлмарě. Хуçалăхра хěле хатěрленсе пысăк ěçсем туса ирттернин пěтěмлетěвě ку. «Оринино» хуçалăхри çакнашкал мал туртăмлă ŭкерчěксем иртнě çулхи ěçсене пěтěмлетсе irттернě канашлăвăн никěсě пулчěç.



Ăратлă выльăх ěрчетекен «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативě-заводăн Çатракассинчи сěт ферминче нумай çул ěнесене машинăпа сăвакан оператор Тамара Николаевна Обжелянская иртнě çул та ŭсěмлě ěçленě.

**МАЛАЛЛАХ ПĂХМАЛЛА**

2012 çулта районти пěтěм категориллě хуçалăхсенче пурě 5 пин те 26 тонна аш-какай туса илнě (унччченхи çулхипе танлаштарсан 97,2 процент). Сěт сăвассине вара 41 пин те 9 тоннăна çитернě (99,5 процент). Ěç кăтартăвěсене районти пěрлешŭллě хуçалăхсемпе уйрăммăн илес пулсан аш-какай туса илесси 1 пин те 382 тоннăпа (виçěм çулхин 83,4 проценчě), сěт сăвасси 8 пин те 267 тоннăпа (97,21 процент), çăмарта илесси 65 миллион та 680 пин штукпа (93,7 процент) танлашнă.

Ěç кăтартăвěсене усă куракан кашни 100 гектар çěр пуçне пăхсан та «каялла туртăм» пурри сисěнет: асăннă лаптăк пуçне хуçалăхсен ěçченěсем 43,3 центнер аш-какай, 261,5 цетнер сěт туса илнě. Ку вăл 2011 çулхипе танлаштарсан 79 тата 92 процент çеç пулать. «Моргаушская» чăх-чěп фабрики те иртнě çул çăмарта туса илессине 6,4 процент чакарнă. Кашни чăхран кунта вăтамран 318 штук çăмарта илнě. Кунти çухату ытларах предприятин хуçисем улшăннипе, вăхăтра инкубаци цехě ěçлеменнипе, çăмарта тăвакан чăх йышě сахалланнипе çыхăннă.

Чăх-чěп ěрчетессипе юлашки çулсенче Ярославкăра вырнаçнă «Фаворит» общество та тăрăшуллă ěçлет. Кунта иртнě çул 156 пин штук çăмарта илме мехел çитернě, халăха хур-кăвакал чěпписене 77 пин пуç сутнă. Ку вăл унчченхи çулхинчен 6 хут нумайрах.

Çултан-çул Суворов яч. хис., Ильич яч. хис., «Герой», «Свобода», «Оринино» хуçалăхсен ěçченěсем аш-какай, сěт туса илессипе ŭсěмлě вăй хураççě. Асăннă хуçалăхсенче пěлтěр усă куракан кашни 100 гектар çěр пуçне 105 – 205 центнер аш-какай, 577 – 1484 центнер сěт туса илме пултарнă.

Хресчен (фермер) хуçалăхěсем аталанса пынине уйрăммăн палăртмалла. Аш-какай туса илессипе пěлтěр Ю. Пушкин, А. Мерлов, А. Афанасьева, В. Павлов фермерсем, сěт туса илессипе И. Чернова, Р. Грачев тытса пыракан çемье фермисем лайăх ěçленě.

Малашлăх пирки шухăшласа пирěн район администрацийěпе Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерстви хăйсем хушшинче ял хуçалăхне 2013–2020 çулсенче аталантарса ěçлесе пымалли Килěшěве алă пусса çирěплетнě. Унпа килěшŭллěн кăçал пирěн районти пěтěм харпăрлăх формиллě хуçалăхсенче тěш тырăпа пăрça йышши культурăсене 28 пин тонна, çěр улмине 55200 тонна, пахча çимěçе 9900 тонна туса илмелле. Малашлăх планěсем выльăх-чěрлěх отраслěнче ŭсěм çулěпе пăхаççě: кăçал чěрě виçепе 5130 тонна аш-какай, 43100 тонна сěт сумалла. Тěллевěсем пысăк, пурнăçламалли майěсем те, хресченсен ěçлес кăмăлě те çителěклех. Пěрле кŭлěнсе йывăр лава пěр ěмěтпе туртсан производство ŭсмеллех, ěмěтсем пурнăçланмаллах.



Сěт сăвассипе ырă ята тата укçан премие тивěçнě ěçченсем – Суворов яч. хис. хуçалăхран. Вěсем хăйсен ушкăнěнчи кашни ěнерен пěлтěр 6 пин килограмм ытла сěт сума пултарнă.

**ХАСТАРСЕМ**

Ял хуçалăх предприятийěсенче пуш уйăхěн 1-мěшě тěлне 5222 пуç мăйракаллă шултра выльăх пулнă. Вăл шутран 2153 пуçě – сумалли ěнесем. Пěрлешŭллě хуçалăхсенче хальхи вăхăтра 4438 пуç сысна пур пулсан, килти хушма хуçалăхсемпе хресчен фермер хуçалăхěсенче – 2068 пуç. Ял çыннисен килти хушма хуçалăхěсенче çавăн пекех 10109 пуç мăйракаллă шултра выльăх тата 6194 пуç сумалли ěнесем пур.

Выльăх-чěрлěх отраслěн ыранхи аталанăвě вырăнсенче çамрăк выльăхсемпе епле ěçленипе çыхăннă. Хальлěхе çамрăк выльăхсем иртнě çул талăксерен вăтамран 611 грамм, сыснасем 395 грамм ŭт хушнă. Кунта «Герой» (845 грамм), «Свобода» (721 грамм), «Путь Ильича» агрофирма (715 грамм) уйрăмах ăнăçлă вăй хунă. «Свобода» хуçалăхри Йŭтěркассинчи мăйракаллă шултра выльăхсен ферминче нумай çул ěçлекен Луиза Кольцовăпа Владислав Дедов операторсене тав сăмахě çеç каламалла.

Самăртма хупнă сыснасем районěпе вăтамран талăксерен 494 грамм ŭт хушнă. Кунта Суворов яч. хис. хуçалăхри Андрей Александров уйрăмах ăнăçлă ěçленě. Вăл пăхакан выльăхсем талăксерен вăтамран 631 грамм ŭт хушма пултарнă.

Иртнě çул хуçалăхсем пурě 1884 пăру илнě. Вăл шутра ěнесенчен – 1572 пуç. Районěпе 100 ěне пуçне 72 пăру илни виçěм çулхинчен 8 пуç сахалрах пулни пирки калать. Кунта вырăнсенчи зооветспециалистсен çиччě виçсе пăхмалли пурах. «Путь Ильича» агрофирмăри Калерия Димитриева, «Герой» хуçалăхри Валентина Леонтьева, Е. Андреев яч. хис. хуçалăхри Александра Васильева техник-осеменаторсенчен тěслěх илмеллине те палăртрěç канашлăва пухăннисем. Иртнě çулхи ěç кăтартăвěсемпе «Герой» хуçалăхăн Çěньял Шурчари сěт ферминчи пăру пăхакан Наталия Рыжковăна чи пултарулли тесе йышăнчěç. Çавăн пекех Роза Добрянская, Клавдия Албутова (Суворов яч. хис.), Елена Смирнова (Оринино), Светлана Димитриева, Марина Федорова («Свобода»), Ираида Тихонова («Путь Ильича) çамрăк выльăхсем пăхнă çěрте лайăх ěçленине палăртмалла.

Сěт – хуçалăхсене кашни кун укçа-тенкě паракан çăл куç. Пěлтěр ял хуçалăх предприятийěсем пурě 8347 тонна сěт туса илнě. Ку вăл ферма ěçченěсем кашни ěнерен вăтамран 4088 килограмм сěт сунине пěлтерет. Çакă малтанхи çулхинчен 129 килограмм нумайрах. Канашлура çак ŭсěм хысěнче те пурнăçласа çитереймен кăлтăксем пуррине палăртрěç.

Хуçалăхсем хушшинче сěт сăвассипе Суворов яч. хис. хуçалăхăн Анаткассинчи сěт фермин коллективне (В. Макарова ертсе пырать) уйрăмах ырă енчен палăртмалла. Пěлтěр вěсем 1212 тонна сěт суса илнě (унччченхи çулхипе танлаштарсан 103,4 процент). Кашни ěнерен вăтамран 6046 килограмм сěт сунă пулсан, кунта ěçлекен Валентина Печкова хăйне шанса панă ушкăнри кашни ěнерен вăтамран 7192 килограмм сěт сума пултарнă. Районěпе сăвăма 6 пин килограмран ирттернисем – 5 доярка, 5 пинрен ирттернисем – 9 доярка.

Иртнě çул пирěн енре районти выльăх отраслěшěн çеç мар, республика аталанăвěшěн те пысăк пěлтерěшлě пулăм пулчě. «Путь Ильича» агрофирма инвестици проектне ěçе кěртсе 500 ěне вырнаçмалли хальхи технологисемпе усă курмалли комплекс хута ячě. Ку ěç хуçалăхра чарăнса ларман-ха, вăл малалла пырать.

**ПАТШАЛĂХ ПУЛĂШĂВĚ**

Малашлăха пăхса ěçлесе пыракан хуçалăхсене патшалăх та пулăшусăр хăвармасть. Пěлтěр ăратлă сысна амисем тытма Раççей Федерацийěн бюджетěнчен района 1 миллион та 436 пин тенкě, республика бюджетěнчен 75 пин тенкě укçа килнě. Кунсăр пуçне пысăк сăвăмлă ěнесене тытса тăма 6 миллион та 433 пин тенкě килсе çитни те пысăк тěкě пулса тăчě. Ěнесене искусствăлла майпа пěтěлентерме ăратлă вăкăрсен вăрлăхне илнěшěн хуçалăхсем 329 пин тенкě, чăх-чěп фабрики ăратлă çăмартасем туяннăшăн 582 пин тенкě укçан пулăшу илнě. Çавăн пекех ăратлă выльăх туяннăшăн хуçалăхсем 13 миллион та 744 пин тенкě, сěт туса илсе патшалăха сутнăшăн килти хушма хуçалăхсене, ял хуçалăх предприятийěсемпе хресчен (фермер) хуçалăхěсене пěрле республика бюджетěнчен 7533 пин тенкě пулăшу çитнě. Çак пулăшу малашне те пуласси пирки иккěленŭ çук.

Хěл тапхăрěн 6-мěш уйăхě пырать. 5 уйăхěнче хуçалăхсем чěрě виçепе 452,7 тонна аш-какай, 3123,7 тонна сěт туса илнě. Сěт сăвассипе Суворов яч. хис., «Путь Ильича» агрофирма кăçал та ŭсěм çулне сыхласа хăварчěç. Чкалов яч. хис., Е. Андреев яч. хис., Суворов яч. хис., «Свобода», «Герой» хуçалăхсем выльăхсене ŭт хуштарассипе аван ěçлесе пыраççě.

Ял хуçалăх предприятийěсен 2012 çулхи пěтěмěшле тупăшě 437 миллион та 800 пин тенкěпе танлашнă. Ку вăл – 2011 çулхи кăтартăвăн 100,1 проценчě. Уйрăмах тупăшлă ěçленисен шутěнче Суворов яч. хис., Ильич яч. хис., Е. Андреев яч. хис., Чкалов яч. хис., «Путь Ильича», «Герой», «Восток», «Оринино», «Передовик», «ВаСем» хуçалăхсем. Вěсен таса тупăшě 14,3 миллион тенкěпе танлашнă.

Выльăх-чěрлěх отраслěн аталанăвě кашни хуçалăх экономикин тěрекě пулнине шутласа асăннă канашлура тунă пěтěмлетŭсем унта хутшăннисене тивěçлě йышăнусем тума хистессе шанас килет.

**А. БЕЛОВ.**

## К сведению кандидатов

Моргаушская ТИК и редакция райгазеты сообщают о проведении жеребьевки в целях распределения бесплатной печатной площади по досрочным выборам в органы местного самоуправления.

Жеребьевка состоится в Моргаушской ТИК в 14 часов 14 марта 2013 года по адресу: с. Моргауши, ул. Мира, 6. Тел.: 62-6-47.

**АКТУАЛЬНАЯ ИНФОРМАЦИЯ**

Граждане, получившие в 2012 году доход от продажи имущества (квартир, земельных участков, дач, гаражей, транспортных средств), принадлежащего им на праве собственности менее 3-х лет, от сдачи имущества в аренду и иных доходов, обязаны предоставить в ИФНС декларацию по форме 3-НДФЛ до 30 апреля 2013 года.

Исчисленная сумма налога уплачивается не позднее 15 июля 2013г.

За несвоевременное предоставление декларации предусмотрена ответственность - от 1000 руб.

Со всеми вопросами можете обращаться в ООО «Виктория».

Наш адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д.6, офис 119. Тел.: 62-4-43.

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:110301:79 о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельных участков, образованных в счет земельных долей. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются:

1. Алексеева Ираида Львовна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Молгачкасы, ул. Строительная, д.58;
2. Бычков Валерий Владимирович, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Молгачкасы, ул. Опа-Кокри, д.52;
3. Вязов Игорь Михайлович, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Молгачкасы, ул. Коммерческая, д.78;
4. Вязова Евсевия Михайловна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д.Молгачкасы, ул.Коммерческая, д.78;
5. Дмитриева Александра Михайловна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Молгачкасы, ул. Центральная, д.23;
6. Ефремова Валентина Ивановна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Молгачкасы, ул. Коммерческая, д.77;
7. Иванов Аркадий Алексеевич, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Молгачкасы, ул. Уралекки, д.135;
8. Иванова Любовь Германовна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Молгачкасы, ул. Уралекки, д.135;
9. Сидюшкина Полина Ананьевна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Молгачкасы, ул. Центральная, д.9;
10. Иванов Василий Павлович, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Молгачкасы, ул. Экремекки, д.91;
11. Иванова Елена Рудольфовна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Молгачкасы, ул.Центральная, д.4, кв.2;
12. Прокопьева Любовь Рудольфовна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Молгачкасы, ул. Уралекки, д.122;
13. Михайлова Вера Михайловна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Молгачкасы, ул. Центральная, д.33;
14. Иванова Елизавета Артемьевна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Молгачкасы, ул. Центральная, д.24;
15. Краснова Вера Витальевна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Молгачкасы, ул. Уралекки, д.133;
16. Уткин Владимир Юрьевич, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Молгачкасы, ул. Уралекки, д.128;
17. Уткин Василий Юрьевич, проживающий по адресу:Чувашская Республика, Моргаушский район, д.Молгачкасы, ул.Центральная, д.43;
18. Кузова Елена Михайловна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Молгачкасы, ул.Коммерческая, д.67;
19. Кузов Владислав Сергеевич, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Молгачкасы, ул.Коммерческая, д.67;
20. Лепешкин Виталий Александрович, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Молгачкасы, ул. Коммерческая, д.72;
21. Лепешкин Федор Павлович, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Молгачкасы, ул. Центральная, д.42;
22. Лепешкина Таисия Алексеевна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Молгачкасы, ул. Центральная, д.42;
23. Никитина Людмила Николаевна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Молгачкасы, ул. Уралекки, д.121;
24. Семенова Александра Афанасьевна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Молгачкасы, ул. Уралекки, д.95;
25. Сорокина Римма Дмитриевна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Молгачкасы, ул. Строительная, д.57;
26. Толстова Римма Мефодьевна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Молгачкасы, ул. Центральная, д.30;
27. Уткин Илья Рудольфович, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Молгачкасы, ул.Коммерческая, д.75;
28. Налимов Николай Алексеевич, проживающий по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Кооперативная, д.6, кв. 4;
29. Васильева Наталия Владиславовна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул.Парковая, дом 1, кв.10
30. Иванов Михаил Петрович, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Тереси, ул. Малтикас, д.5;
31. Леонтьева Ольга Николаевна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Молгачкасы, ул. Центральная, д.27;
32. Николаева Галина Ивановна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д.Тереси, ул. Карикас, д.41;
33. Сорокина Татьяна Ивановна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д.Тереси, ул. Новая, д.60;
34. Николаев Михаил Иванович, проживающий по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Хузангая, д.28, кв. 91;
35. Сорокин Герман Георгиевич, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д., ул. Центральная, д.21;
36. Шариков Геннадий Анатольевич, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Тереси, ул. Карикас, д.35;
37. Шарикова Валентина Анатольевна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Тереси, ул. Центральная, д.12;

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Красновой Р.Н. номер квалификационного аттестата № 21-11-28 от 08.02.2011 г., почтовый адрес: 428032, Чувашская Республики, г.Чебоксары, ул. Ярославская, д.25, электронная почта –ooozemly@rambler.ru.

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:110301:79, адрес (местоположение): Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, СПК «Восток», поле №3, севооборот 1; поле №3, севооборот 2; поле №4, севооборот 1; поле №4, севооборот 2; поле №5, севооборот 1; поле №5, севооборот 2.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу: 428032, Чувашская Республики, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д.25

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 428032, Чувашская Республики, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д.25, а также в филиале ФГБУ "ФКП Росреестра" по Чувашской Республике – Чувашии по адресу: 428000, Чувашская Республика, г. Чебоксары, Московский пр-т, д.37.

## Пĕлтерӳсем. Объявления




5-11.

**ТЕПЛИЦЫ** от производителя из сотового поликарбоната 3х6, 3х8 и т. д. Телефоны: 8-917-651-00-76 8-927-858-28-79.

ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА Brusbox от производителя. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Каждое седьмое окно в подарок. Замер и доставка бесплатно. Закажите зимой окна в рассрочку, установим весной. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16а. Тел.: 8-937-955-33-00, 8-917-662-71-64. 9-10.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 2-10.

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ Тел.: 8-927-667-40-92.** 8-30.

**15 марта в РДК с 9-00 до 18-00 час. распродажа КОНФИСКАТА: трикотаж, постельные наборы. Приглашаем всех за покупками.**


* * *

ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:281001:2, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Иванов Андриян Германович, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Торханы, ул. Мичурина, д. 12.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:281001:2. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

* * *

ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:140501:2, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Волкова Павлина Константиновна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Хорной, ул. Первомайская, д. 27.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:140501:2. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Хорнойское сельское поселение.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

* * *

ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:140501:2, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Хмелева Нина Михайловна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Хорной, ул. Первомайская, д. 9.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:140501:2. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Хорнойское сельское поселение.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

* * *

ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:072501:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Комиссарова Галина Капитоновна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Калайкасы, ул. Зеленая, д. 52.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:072501:1 Адрес местоположения образуемого земельного участка: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

* * *

В объявлении о согласовании проекта межевания земельного участка Каргиной Лидии Николаевны, опубликованного в райгазете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 24 ноября 2012 года в № 91 (8052), пропущено одно предложение: в конце объявления дополнительно следует читать «Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37 (филиал ФГБУ «ФКП Росреестр»)».

* * *

Продаю племенных кроликов-акселератов калифорнийской породы. Тел.: 8-927-66-55-900.

* * *

В магазине «Пчеловодство» (здание «Сельхозтехники», 1 этаж) весенние скидки на мед, цена 290 руб. за 1 кг, также в продаже мед с прополисом и мед с пергой.
Тел.: 8-909-301-45-11. 1-2.

* * *

Утă сутатăп. Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх.
Тел.: 8-927-846-20-46.

* * *

Кил-çурт çавăрма 40 сот. çĕр сутатăп. Çĕн Чемей ялĕ, Солнечная урам, 12-мĕш çурт. Тел.: 8-906-136-58-79.

* * *

Май уйăхĕнче пĕрремĕш пăруламалли хура-шурă тĕслĕ тынашки сутатăп. Тел.: 8-927-861-90-54.

* * *

Продается трехкомнатная квартира с мебелью в кирпичном доме в центре с. Моргауши. Цена 2 млн. 100 тыс. руб. Тел.: 8-906-381-58-51.

* * *

Продаю кур-молодок. Возможна доставка.
Тел.: 8-909-300-08-18. 1-2.

* * *

Виççĕ пăруланă хура ĕне сутатпăр.
Тел.: 8-965-688-85-47.

* * *

Уважаемые пчеловоды!

19 марта в 10 часов состоится совещание пчеловодов района в здании администрации района. 1 этаж, методкабинет. Ждем вас. 1-2.

* * *

Утерянный аттестат Б № 002486, выданный Шомиковской восьмилетней школой 5 июня 1978 г. на имя Романовой Галины Александровны, считать недействительным.

* * *

На постоянную работу требуются монолитчики. Оплата сдельная. Питание. Жилье предоставляется.
Тел.: 8-905-028-70-00. 2-2.

* * *

Тăваттă пăруланă хĕрлĕ тĕслĕ ĕне сутатăп.
Тел.: 8-927-990-25-34. 2-2.

* * *

Январь уйăхĕнче пĕрремĕш пăруланă хура тĕслĕ ĕне сутатăп. Тел.: 8-937-375-26-74.

---

Администрация Моргаушского района, отдел культуры и архивного дела, профсоюз работников культуры Моргаушского района выражают глубокое соболезнование родным и близким Григорьевой О.В., директора МАОУДОД «Моргаушская детская школа искусств им. Ф.С. Васильева», по поводу кончины матери

**ГРИГОРЬЕВОЙ**
**Любовь Егоровны.**

---

Коллектив МАУ ДОД «ДЮСШ-ФСК «Сывлăх» выражает глубокое соболезнование родным и близким Григорьевой О.В. по поводу кончины матери

**ГРИГОРЬЕВОЙ**
**Любовь Егоровны.**

---

Коллектив ОАО «Чувашская энергосбытовая компания» глубоко скорбит по поводу безвременной кончины директора Ядринского межрайонного отделения компании

**ГРИГОРЬЕВА**
**Сергея Станиславовича**

и выражает соболезнование родным и близким покойного.

---

Муркаш райпо коллективĕ Лантăш пекарнинче слесарь-ремонтник пулса ĕçленĕ

**Егор Станиславович**
**ЯЛУГИН**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе, çывăх çыннисемпе, тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

---

СПК-племзавод «Свобода» правленийĕ

**Николай Тихонович**
**ШИРОКОВ**

пенсионер, ĕç ветеранĕ вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

---

Мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕ, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем Муркаш ялĕнче пурăннă ĕçпе вăрçă ветеранĕ

**Георгий Арсентьевич**
**МАРТЫНОВ**

пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайнă пирки тарăннăн, чĕререн хурланса пĕлтерессĕ.

## Прогноз погоды

| | среда 13 марта | | | | четверг 14 марта | | | | пятница 15 марта | | | | суббота 16 марта | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | -16 | -13 | -7 | -11 | -16 | -12 | -6 | -11 | -14 | -12 | -3 | -5 | -6 | -1 | +2 | 0 |
| Давление мм | 743 | 744 | 744 | 744 | 745 | 746 | 747 | 748 | 748 | 747 | 747 | 746 | 745 | 743 | 742 | 744 |
| Влажность % | 69 | 71 | 56 | 66 | 72 | 70 | 59 | 66 | 70 | 71 | 65 | 71 | 76 | 76 | 71 | 73 |
| Ветер м/сек | 2 | 3 | 2 | 2 | 1 | 2 | 3 | 2 | 3 | 4 | 5 | 6 | 5 | 7 | 8 | 6 |
| | С-В | С-В | С-В | Ю-В | С | В | Ю-В | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю |
| Солнце восход / заход | | 07:11 | 18:52 | | | 07:08 | 18:54 | | | 07:06 | 18:57 | | | 07:03 | 18:59 | |
| Луна восход / заход | | 07:18 | 21:17 | | | 07:38 | 22:30 | | | 08:01 | 23:41 | | | 08:28 | - | |


Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:

Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» Чăваш Республикин хай тытăмлă учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 2,0 пичет листи.

Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.

Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Белов А.П.
Пичете панă 12.03.2013 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4948.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.